4-мӗш № Февралӗшӗн 1928 ҫ.
3-мӗш ҫул тухать.

# КАПКӐН




## „КАНАШ“ йупилейӗнђе.

„КАПКӐН“ (Канаша): Хӑҫан хӑвса ҫитӗпши сана? Есӗ 10 ҫул тултаратӑн, епӗ 3 ҫул ҫеҫ тултаратӑп.

„КАНАШ“ (кулса): Хытӑрах ђуп, вара ҫитӗн.

# Улахсене ҫӗнетме кайсан.

Пӗре каҫалапа ман пата Итон Ваҫлейӗ (унӑн ашшӗн ҫил арманӗ пур та, ун ҫинҫен есӗр сӑмах сарса ан ҫӳрӗр, атто ӑна комсомола кӗме йӑвӑр пулаҫ) килҫӗ те:

— Снайӗш, хаҫатсем ҫинҫе улахсем тӑрӑх хаҫатсем, шурналсем вуласа кӑтартма хушаҫҫӗ, тавай ӗҫлеме тытӑнар, терӗ.

— Ку лайӑх йапалаҫке, тавай, тавай, терӗм.

Ҫав каҫах Итон Ваҫлейӗпе йалӗҫтӑвкома кайса кӑсйесене 5—6 „СУНТАЛ", 20 хаҫат, „КАПКӐНСЕМ" ҫикрӗмӗр те, йалти кулаксене ҫутта кӑларса ҫӗнетме тухса утрӑмӑр. Кӗпер патӗнҫи Антушша арӑмӗ тӗлне ҫитсен:

— Айта ҫакӑнта кӗрер, кунта кашни каҫах пӳрт тулли пулаканҫӗ, терӗ Ваҫлей.

Кӗтӗмӗр. Ҫӑнах та улах аҫисем пӳрт туллийех. Тӗпелте хӗрсем, алӑк патӗнҫе каҫҫӑсем ҫӗлӗмсене мӑкӑрлантарса лараҫҫӗ. Ахӑраҫҫӗ.

— Ну, аҫасем, ахӑрса ывӑнтӑр та пулӗ, тавай „Капкӑн" вуласа кӑтартам, итлеттӗри, терӗм епӗ тӗпелелле иртсе.

Итлетпӗр, итлетпӗр, тесе ҫуйӑхса илҫӗҫ хӗрсем.

Кил хуҫи хӗрӗ, мана ларма вырӑн ҫук пирки, кӑвас ҫӗресси ӳпӗнтерсе паҫӗ. Лартӑм. Вулатӑп. Хӗрсем итлеҫҫӗ. Кулӑшла тӗлте кӑкрисене силлесе ахӑраҫҫӗ. Пӗр питӗ кулӑшла алиментсем ҫинҫен ҫырнине вуласа кӑтартсан:

— Нуккӑ, тепре вуласа тухха, терӗ алӑк патӗнҫе ларакан Шӗвӗр Иакку. Вулама пуҫласан ҫуррине ҫитсенех:

— А-ах, есӗр кунта манран мӑшкӑлама килни, мана намӑс кӑтартас теттӗри...—ҫӑнт-ҫант анҫах ҫутӑлтарма тапратрӗ мана хайхи Иакку.

— Ара кунта сан ҫинҫен ҫырман, ахаҫ ҫавӑн йышши ҫынсем ҫинҫен ҫырнӑ вӗт, тесе ӳкӗтлеме тытӑнҫӗ ман Ваҫлей.

— Ҫырман кӑтартам сире, тӑн сире тӑн...

Пысӑкскер, мана виҫӗ хут ҫупсах тӑнран кӑларса йаҫӗ. Кӗҫ Иаккуне хӑйне тӳпелеме тытӑнҫӗҫ. Ун майлисем те тупӑнҫӗҫ. Ваҫлей та хутшӑнса карӗ. Епӗ кӑмака умнелле пуҫ ҫавӑрӑннипе кӗрст татӑлса антӑм та, кайран мӗн пулнине курман вара.

Тӑна кӗрсен, куҫа уҫса пӑхрӑм та пӳртре Антушша арӑмӗпе Ваҫлей иккӗшех лараҫҫӗ.

— Ну мӗнле, вилмерӗни „Капкӑн" парни, тет мана Ваҫлей.

— Вилмен пулмалла-ха, ҫӗре сикнӗ пек туйӑнаҫ, терӗм еп кӑкӑра хыпаласа пӑхса.

— Вилмен пулсан, айта тӑр. Тепӗр ҫӗре кайар. Пӗре тытӑннӑ ӗҫе туса пӗтересех пулаҫ, тесе Ваҫлей хулӑран тытса ура ҫине тӑратрӗ те, Ваҫлей хыҫҫӑн сулӑнкаласа Антушша арӑмӗ патӗнҫен тухса карӑмӑр.

— Итлеха, леш йенҫи Матрун ашшӗсем кӗҫӗр ӗҫкӗре пулас, унта хӗрсем нумай пулмалла, айта ҫавӑнта кайар, терӗ Ваҫлей урама тухсан.

Карӑмӑр Матрунсем патне. Хӗрсем сак туллийех. Аҫасем ытлашшийех мар, кашни хӗр пуҫне пӗререн ытла тивмест. Матрунпа Куҫук тата каҫҫӑсемсӗрех лараҫҫӗ. Ваҫлей Куҫук ҫумне ларҫӗ, Матрун хӑй ҫумне мана лартрӗ. Епӗ кунта та „Капкӑн" вуласа вӑрҫӑ кӑларас мар тесе, „Сунтал" кӑлартӑм та, сӑвӑсем вулама тытӑнтӑм. Пурте шӑп пулҫӗҫ. Пӳртре йӗке сассипе ман сасӑ ҫех илтӗнет. Сӑвӑсем вуланӑ майӗпе мана, хам ҫӗре тӑрӑх ҫу йухнӑ пек туйӑнаҫ. Паҫӑр пуҫ ҫине шӑтнӑ мӑйӑр та ыратма ҫаранннӑ. Сылтӑм хулла Матрун ҫӗри тапни кӑрст-кӑрст сиктерет. Ах, аванҫке...

Анҫах сывлӑш ҫавӑрма тесе, пуҫа ҫӗклесе пӑхрӑм та, ак, йӗксӗк-хӗрсем пурте каҫҫӑсемпе пӑшӑлтатса лараҫҫӗ. Пӗр Матрун анҫах ман ҫумра ҫӗнмесӗр ларать.

— Сан кӑмӑла кайаҫҫӗ-и ку сӑвӑсем, тесе ыйтрӑм епӗ Матрунтан сӑвӑ вулама пӑрахса.

— Ах, шутсӑрах кайаҫҫӗ. Мӗнле аҫа ҫырнӑши вӗсене, кураҫҫӗ ӑна. Вӑл хӗрсене питӗ хытӑ йуратма пӗлет пулӗ, терӗ Матрун мана хирӗҫ хаш хуйхӑрса.

Хӑйӗн куҫӗсем каҫхи шурӑмпуҫ пек сӳрӗлсе кайнӑ. Кӗҫ йӗкине пӗтӗрме те пӑрахрӗ. Епӗ те „Сунтала" ҫӳреҫе

# Лаша пасарĕнҫе.

Хулăм укçи илни—хĕрарăма вы-
ҫăх вырăнне хуни пулаť.



— Лашине мĕншĕн хаклă ыйтатăн?
— Хаклă кĕлемесĕр. Ара сарă вăл. Хĕрарăм та сарри хак-
лăрах тăраť.

умне хутăм та, Матрŭн кăмăлне пусарма тытăнтăм. Мĕне кирлĕ çумра çав таран илемлĕ хĕр пур ҫух „Сунтал" тавраш...

Пĕр ик сехет ларсан, ҫŭреҫе йанаххи çинҫе лаҫкам шыв пулнă. „Сунтала" пуçтарса ҫикрĕм те, киле тухса карăмăр.

Тепĕр ирхине, çырмари çăла лаша шăварма ансан, Матрŭн ашшĕне тĕл пултăм.

— Есĕ-и ха вăл, тур таташшĕ, ыр çын хĕрне кĕнекесемпе илĕртсе çŭрекен. Хĕр парам сана.

Шыв çеклине илҫĕ те, йашт анҫах тутарҫĕ ман йенелле. Хамăн алă-ура провор та пыраť, атту пĕртен пĕр пуçа çапса салатаҫҫĕ, мур илешшĕ!

РОНИ.

### Писсаттĕлсем нумайланаççĕ.

Кашни кун çĕтсе пымалли кăлентарсем çĕнĕрен тухнăранпа кулăшла калавсем çыракан ҫăваш писсаттĕлĕсем труках нумайланҫĕç. Писсаттĕлсене нумайлатма вырăс ҫĕлхипе тухакан «Лапаť» шурнал ҫăваш йалĕсене нумайрах сарăлни те пулăшса пыраť. Ун пек писсаттĕлсене, темĕн пирки тата, «Капкăн» шурнал «вăрă» тесе йат панă. Ун пек писсаттĕлсен пултарулăхĕ çинҫен «Капкăнăн» çитес нумĕрĕсенҫе çырса пĕлтерсен, писсаттĕлсем савăннипе... хĕрелсе кайĕç.

# Тĕрлĕ сăлтавсемпе йанă çырусем

## 1. Ĕç шырама кайнă хуларан ашшĕ патне йанă çыру.

Йуратнă атте! Епĕ ĕç шырама кайни 1 уйăх тулђĕ пайан, вырăсла каласан йупилей пулђĕ. Вăрман касса пĕтертĕри? Çав тери йăвăр пуђ вăрман касма.

Аван вырăн тупрăм. Мансăрăн пĕр хут та тухса кайаймасŧ уђрештенирен. Анђах çаратса карĕç. Çаппа-çарамас, çара уран йултăм. Атă сутнă укçапа... (ку виç сăмаха çыраканни ђернилпа лайăхрах хуратнă). Аран-аран парăма кĕрсе (вексĕл тăрăх) çăпата илсе сыртăм. Укça йамăрши, атте, киле çитмеллĕх. Вăрманне касса пĕтерни çинђен пĕлтерсен аванђĕ те...

Сирĕн ывăлу Ваççили.

## 2. Хуларан арăмĕ патне йанă çыру.

Йуратнă матка, Утатти Ваççилђă! Сана выђăх-ђĕрлĕхсемпе сывă пурăнма сунатăп. Епĕ кашни майрасене курмасĕренех сана аса илетĕп. Майрасем санран илемлĕрех, санран çыпăçуллăрах, санран ăшă кăмăллăрах, тата санран лайăхрах ђуп тăваççĕ пулин те, вĕсен çывăхне епĕ пымастăп. Ĕнер пĕр çĕртен тавраннăранпа, сан çинђен çав тери нумай шухăшланипе, пуç анђах мар, ĕнсе те ыратакан пулђĕ. Манпа уйăрлас шухăш кĕмести хам çук ђухне? Уйăрлас шухăш пулсан, пытармасăрах кала.

Санăн йуратнă упăшку Тăмитрийĕв.

## 3. Каçару ыйтса йанă çыру.

Хăта! Пайан вырăн çинђен тăрсан пăхатăп—сăмса манăн тур кĕтесси йенелле ђалăшса кайнă. Мĕншĕн ђалăшни çинђен маткаран ыйтрăм та, вăл мана, пĕр пытармасăрах тăнлантарса пађĕ. Ĕнер, çăварни кун, пĕр сехет ытларах санпа ăш кăмăллăн калаçса ларнă хыççăн, сана епĕ паллаймасăр: шуйттан кĕвенти, тенĕ. Мана хирĕç есĕ манăн сылтăм хăлха параппанне çапса йанă. Епĕ асăрханаймасăр çĕре персе ўкнĕ вара. Вăл сахалха—урайĕнђен тăрсан, йĕкерђĕ çийес ш ухăшпа, санăн хăлхуна çыртса илнĕ епĕ.

Пайан вăл ĕç çинђен тĕплĕрех сўтсе-йавса ларнă хыççăн, санăн хăлхунтан каçару ыйтас, терĕм. Хăлхупа иксĕр те каçарăр. Шуйттан кĕвенги тесе урăх вилсен те каламăп.

Иван Упрамăв.

## 4. Хăй савни патне йанă çыру.

Савнă, Варвари! Епĕ сана йуратса пăрахни 1 уйăх та 3 кун çура ытларах иртрĕ. Есĕ мана палламастăн пулмалла, мĕншĕн тесен, ман пек хура кĕрĕк тăхăннă, хитре питлĕ çынсем епĕ анђах мар. Паллама кирлĕ пек те есĕ мана—иртнĕ пасарта санăн уру çине пусса иртсе кайнăђĕ те... Пурçăн тутăрушăн та мар, аçушăн та мар, хăваншăн, хăвăн ыра кăмăллушăн йуратăтăп сана. Хăвăр йалсенђен ыйтса пĕлнĕ тăрăх, санăн шур йапала 3 çўпçе, 3 кĕрĕк, 1 тăлăп пур, теççĕ. Çырупа пĕлтерха: санăн амун нумай ађа пулман пуђçке?

Саншăн епĕ вилме хатĕр, анђах малган кађђа пыр.

Сана сахăр пек йуратакан Йефремăв.

## 5. Ретаксийе килнĕ çыру.

Ман çирен хаçатра „хăйĕн вăрăм сухалне ђетвĕрт ерехле сутса ĕçсе йанă", тесе çырнă. Суйа ку, тупата суйа! Туршăн та хĕвелшĕн ерех тутанса пăхман епĕ халиђђен. Сухалне епĕ Ваçли ерех ĕçтеређђенех кастарса йанăђĕ. Ваçлирен ыйтăр ĕненместĕр пулсан. Манăн сухал çинђен текех çавăн пек суйса çырасран сыхланăр! Сута паратăп.

Ентип Макарĕ.

Хутсене пĕрпĕрин çумне çĕлелекен çĕвĕç **Иван—Муђи.**

# Ҫăпта леҫме кайни.

Кăҫалҫен епĕ ниҫта та ҫул ҫӳреме кайас тесе ҫăвара карманҫҫĕ. Килте кăмака ҫинҫе пĕрмайах пĕҫҫе-каҫҫа ҫӳлелле тăратса выртаттăмҫҫĕ. Хаҫ ҫак вăхăтра хамăр йалти промысла копператтивĕн претҫетаттĕлĕ ман пата пырса: ну, айта кăмака ҫинҫе выртакканни! Ҫăпта леҫме кайăпăр пайан, терĕ.

Епĕ кăмака ҫинҫен пĕҫĕк аҫа ӳкнĕ пек, кăпăрт анса тăтăм та, ҫиҫҫас пырап тесе, каласа йатăм. Хăй вăл тухса кайсан, пăхатăп тĕпелти сак ҫине, ҫăкăр та ҫук. Тата ҫӳлĕк ҫинелле пăхрăм, унта та пулин ҫук. Сĕтелли ҫинҫе пĕр шампа хырăма тăранмаллăх ҫăккăр пур, ăна пĕр хутаҫ тĕппе аптарса йатăм та, пĕр муҫала татăккипе хутаҫ анине ҫыхса лартрăм.

Ҫăкрине хатĕрлесен, ҫунине шаккакаласа йусакаларăм. Ҫунин пуҫĕ малтанах ванҫăкҫҫĕ те, хаҫ пырĕ тесе, ăна йусамарăм.

Хăвăрт лашине кӳлтĕм те, промысла копператтивне ҫăпта тийеме вĕҫтертĕм. Пирĕн ҫăптине леҫме инҫех каймалла мар,—Шупашкара килмелле.

Ҫăпта тийесе пĕтерсен, тӳрех унтан тухса кайрăмăр. Епĕ хаҫ апат ҫименни талăк ҫитесси 1 сехет ҫеҫ. Манăн хырăм та выҫса, шалти машинăсем апат ыйтма пуҫларĕҫ. Хутаҫри пĕр шампа хырăма ҫимелĕх ҫăкрине туртса кăлартăм та, веҫех ҫисе йатăм. Хамах шампа хырăм пултăм. Шупашкара Ҫăвашпроисвотсойуса ҫăпта парсан, пăртак хула хушшине кайса курас, тесе уттартăм. Хулари лапкари кулаҫăсене курсан, ман хырăм каллех выҫса карĕ. Кулаҫăсем илме укҫи ҫук. Выҫса вилесси ҫеҫ йулҫĕ пулмалла. Кайалла хамăн ҫуна патне пырсан, ҫуни ҫине лартăм та, и-и! вĕҫтертĕм килелле.

Ех-хе-хей, пĕҫҫе-каҫҫа ҫӳлелле тăратса выртса та, хырăм тăрантармалли ҫук ку саманара.

Х.—Х.

## Самооплошени пирки.



Пуп: Манăн йала „самооплошени тăвас килет.

Хресҫен: Есĕ хăна самооплошени ту.“

### Хаҫат-шурналсем хуҫалăха малалла йама пулăшаҫҫĕ.

Йалсоветра пурăннă ҫухне, виҫĕмҫулпа пĕлтĕр, йалсовет йаҫĕпе килнĕ хаҫатсем пĕтĕмпех ман алăра пулҫĕҫ. Пит усăллă пулҫĕҫ вĕсем маншăн. Хаҫат пирки хуҫайства вăйлатрăм. Пĕрик ҫул хушши пухăннă хаҫат нумĕрĕсене... сутрăм та, пăта йахăн пулҫĕ. Вăл укҫапа икĕ сысна ҫури илтĕм. Сысна ҫурисем кăҫал 8-шар ҫурă туса паҫĕҫ,—18 сысна пулҫĕ. Кун пекех пулсан, килес ҫул 144 сыснана ҫитеретĕп. Хуҫалăх малалла карĕ. Сывă пулҫăр хаҫат-шурналсем!

Вăрттăн хушамата ҫырмастăп.

# Утлантӑм кӗсре



Утлантӑм кӗсре, хӗстертӗм пӗҫпе, йатӑм ҫулпала мӗн пур вӑйпала. Кӗсремӗм улатур ҫиҫӗмле ҫиҫет; тип-вӗҫкӗн, шур йур тусанла вӗҫет. Мӗн ђухлӗ арман, тӗрлӗрен вӑрман—ђӗнмесӗр йулаҫҫӗ, ҫул ҫутти параҫҫӗ. Пыратӑп-пыратӑп пӗр йала куратӑп— Канаш районӗ, Ђиркӳллӗ Йенӗш.

Кантарас кӗсрене, кӗрес пӗр киле. Айта кунта, кӗрер Совета! Тӑ-ӑр, кӗсрем! Ӑш пӳрте кӗрем, айта есӗ те,



тулта йерӗн ӗслӗке! Пӳрђӗ пуш-пушах, хутсем тӑтӑшах выртаҫҫӗ урайӗнђе, пӗр-пӗрин ҫинђе. Суйланӑ кунтанпа ҫетатлӑ пыман, мӗн тӑван кахалпа? Нимӗн те туман! Хут ҫине лартӑмӑр, апатлантӑмӑр, тухрӑмӑр-вӗҫрӗмӗр Канаша ҫитрӗмӗр.

Канаш хули темрен те паха... ӗҫсем ђипери? Анса пӑхамха. Паллӑ страхкассӑ—ларать пӗр сассӑр; уполномођђӗннӑй—ҫынсенђен йутшӑннӑ. Никама ђӗнмест, хутсене илмест. „Ҫук" ҫине пенӗ, суйма пикеннӗ. Тӗрлӗ хут ђиксе, сакӑр хут ҫитсе, укҫа илеймеҫ, мӗншӗнне пӗлеймеҫ. Кунта ӗҫ наҫар, малалла кайар. Ши-и-и, кӗсрем! Сыв пулӑр, хӗрсем!

Ҫӗрпӳ районӗ. Пушарпуҫ йалӗ, кунта ђун канӗ, тесе пыратӑп, вӑрахӑн хӑ-



ватӑп. Уђитлӗ мурӗ (старав та турӗ) ӑсатать кӗнеке шкултан килелле. Шкулне ҫитрӗм, пурне те сисрӗм: ҫӗмрӗк парттӑсем, кивӗ пукансем выртаҫҫӗ тулта, йур ҫинђе канса. Вӑт тепе рас, кӑна мӗн тӑвас? Хут ҫине ҫырас, халӑха калас. Кунта ыр ӗҫ ҫук, ыр кун курас ҫук. Иурт, кӗсрем, йуртах! Иулас мар кунтах!

Ҫитрӗм Шупашкара, кӗтӗм Пайторка; тӗлӗнмелле ӗҫ—каламастӑп: пӗлӗҫ!



Пођакков прикашђӗк—хыснана йакатшӗк: икӗ вырӑнта ҫапать укҫана. Прикашђӗк ав! Вӑн унта сав! Телейлӗ ыр ҫын, пӗр пуҫра ик ђин! Ђикет кӗмӗле сӑран портфӗле. „Камран килет-ши, Ре-Ке-И пӗлет-ши? Ҫӗпритун—ПАПАЙ.

# ОТЂОТ

(Кив-Ђутайкасси халăх пуххи йышăннă протоккол тăрăх).

Çанталăк хăрах кўçне хупнă, теппĕрне те кĕç-вĕç çех хупасшăн тăраť. Шăмшак питĕ йăвăр, пуçа хунă çĕре урасене улăхтарса хуриђђен харлаттарма та пуçламалла. Пăђ-пађ краçсын лампписем ђăл-ђал çутла-çутла кайаççĕ.

— Халăх çине! тенĕ сасă Ухсах Куçма пўртне çурсах кĕђĕ.

— Кăна Рахмат Кĕркури кăçкăраť пулас, вăл кирек хăçан та вара урама тухса тутар пек йантратаť, терĕ Куçма хыçаланкаласа ларакан маткине.

Унђђен те пулмарĕ:

— Ей-й!, —Шак, шак, шак!.. Куçман вĕрлĕ хапхине хăпăтса антарас пекех шаккарĕ...

— Е-й-й! Халăх çине!

— Мĕн халăх?

— Иалсовет хăйĕн ĕçĕсем çинђен отђот туса параť. Пурин те халех шкул çуртне пухăнмалла!

— Иураť, йураť!

Куçма сасси те урамри сасăна тухса алă пађĕ.

— Ку халăх хăвалакан Ђалăш Тарас, кирек хăçан та вара ђалтăрса хапхасене шаккаса çўрет.

*
* *

Пилĕк минутран шкул пўртне кĕрсе кайакансем ђылайах куранма пуçларĕç.

Куçма та пăтавкка пек ђĕлĕмми çине пуса-пусах тапак тултарђĕ те, кукăр туйине илсе тухса лакăштатрĕ.

Шкулта парттăсене стсенă йенелле çавăрса лартнă. Стсенă çинђе йалĕçтăвком претçетаттĕлĕ Прамун Иăванĕ каркаланса тăраť.

— Иулташсем! тесе пуçларĕ хай ораттăр.—Епĕ сире йалсовеђĕ ĕçĕсем çинђен кварттађнăй отђот туса парамхă. Пирĕн йалта хађ 604 çын пурăнаť. Вĕсенђен 338 хĕрарăм, 326 арçын. Епĕ, çелсовета кĕнĕрренпе, 12 çын хутшăннă (çуралнă), 5 çын катăлнă, вĕсенђен виççĕшĕ вилнĕ, иккĕшĕ кађђа кайнă. Иалсовет çумĕнђе тăвата çекси пур (халăх сывламасăр итлет). Вуткăварпа кĕрешекен çекси çу кунĕсенђе кил çывăхĕнђи мунђасене пиђетлеме хушнă.

Санитари çекси...Çул-йĕр çекси (Кукăр çырма кĕперри такçантанпах ишĕлсе выртаť, çавна тўрлетмелле пулнă—тўрлетмен). Çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен çекси—нимех те тăвайман. Хресђенсене хаçатсем вуласа пама хушнă. Ытти ĕçсем те çав йевĕрлех пыраççĕ, халăх поли менее лăпкă. Кăçал çапăçу мĕн пулнийех сахал. Пĕр И. Плотниккăв Аваккумăва хĕненĕренпе никамах та çапăçни илтĕнмест.

Тата çакна каласа хăвармалла:

Пĕлтĕр ђир-ђĕр сараççĕ тесе, йытă кушаксене веçех персе вĕлерђĕç те, кăçал йалта та кушак Иван Пориссăвăн анђах, шăшисем хĕве кĕрсе кайма тапратрĕç. Ах, тата каласа хăварма та астуман... Питĕ интереснă — Тури Максимђăн сурăхĕ сакăр уралла путек çурланă, тет.

— Пĕтри? терĕ пуху пуçлăхĕ.

— Пĕтрĕ.

— Камăн ыйтусем пур?

— Мана парха?

— Пошалстă.

— Мĕнле йапала пулђĕ вара кăçал, салтак арăмĕсем, лашасăр çынсем пĕр шăрпăк вутăсăр йулђĕç, çĕрме пуйансем, торковшђĕксем икшер-висшер куп вутă турĕç, терĕ пĕђђен пурăнакен тăлăх Матрўне аппа.

Пирĕн Прамун Иăванĕ кăркка аçи пек пăш! хăпарса кайрĕ те:

— Вăл ĕçе еп пĕлместĕп, уполномођĕннăй пĕлет. Тепĕр тесен сире мĕн вутă памалли пур, есĕр пур пĕр кайса тăваймастăр, ахалех пĕтереттĕр. Ђăмласа памалла-и мĕн тата сире! — тесе çатлаттарса хуђĕ.

— Урăх ыйтусем çуки?

— Çук...

— Пухува хупăннă шутлатăп...

Халăх йерипен пуçне ђиксе тухса кайа-кайа пĕтрĕ. Шкул пўрђĕ вутăсăр йулнă салтак арăмĕсемшĕн пĕђђенех макăрса йулђĕ. Л. Ç.

# ЙĔПЛĔ ÇĂМАХ ХЫПТАРАМ.

## Тыр вырмалли машшинсем йур вырма кайнă.

Çĕрпӳ районĕнҫен çыраççĕ: Мэлтикасри çĕрçĕ ерттелĕн Кромăв йатлă пуçлăхĕ кăмака çинҫе харлаттарса çывăрнă вăхăтра, авăн çапмалли, утă çулмалли, тыр вырмалли машшинĕсем хĕллехи сивĕ çанталăкра йур вырма тухса кайнă. Анҫах йурĕ тарăн пирки, машшинĕсем курăнмаççĕ, йуршĕнҫе хăш-хăш, маш-маш хашкаса лараççĕ. Кăсен тата нумай хашкаса лармалла-и?—тет Витĕр йулташ.

Тутăхса кайаҫҫенех хашкаса лармалла. Кромăвĕ те тутăхма пуçланă пулмалла, пĕр витти тухса та ӳкнĕ,— ав, йуршĕнҫе выртаť. Йĕплĕ çăмах шывĕпе çуса тасатсан, тутăхма пăрахи анҫах.

## Тĕлĕнмелле майпа тупăннă йапала.

Авалхи йумахра Нил шывĕнҫе йухса çӳрекен корçинккăра Моиççей йатлă аҫа тупăннă.

Улйанăвскăри Ҫăваш техникăмĕнҫе феврађ уйăхĕн 5-мĕш кунĕнҫе, ирхине, 9 сехетре, умывальникре пĕр килсе пăрахнă ывăл аҫа тупнă. Аҫине хулари майра килсе пăрахнине курнă. Палласа йулайман, тет Хв.

Вĕренекен аҫасенҫен алимент илес çук, тесе пăрахса хăварнă ĕнтĕ вăл майра хăй аҫине.

## Комсомолĕс ăс пани.

Иалта самакунпа кĕрешес ĕç аван пыраť. Унта та кунта та токлатсем пулса иртеççĕ ун çинҫен.

Ишекри Шăпаҫава (Шуп. р.) Иванов йатлăскер сăмакун сийенĕ çинҫен ăнлантарма килнĕ. Иапăр-йапăр Иванов йулташ ҫухăнсен пуххи пухаť те, тапратаť токлат тума: вăт, хресҫенсем, есĕр пĕртте сăмакун ан пĕçерĕр, вăл сийенлĕ, тет. Тем сăмакун тăваҫҫен кăрҫама тăвăр та, луҫҫă лайăх, тет.

Çук, Иванов, санпа пăтă пиçместь, сăмакун çеç пиçет.

## Сыв пул, савни!

Сыв пул, савни, сана епĕ текех курас çук. Мĕнле уйăрласши санпа, тесе кам кама калаť, теттĕр есĕр?

Кĕнер йаҫейкки çыруçи (Куславка р.) Морсков 3—4 комсомолĕса йертсе ханшапа кĕрешекен кампанире, ним пĕлми ĕçсе ӳсĕрĕлнĕ. Мĕн тăваттăр, тесе ыйтсан: самаконпа прошҫатсă тăватпăр, теççĕ.

Комсомолпа прошҫатсă тăвăр есĕр!

## Иуратуллă ҫĕре.

Хушнă ĕçе тума йуратакан çын тĕнҫере пит сахал, тени тĕрĕс сăмах мар вăл. Финанс Комиссариатĕнҫе ĕçлекен Миххей Ианей́ĕв пĕрпĕр йала командировкка кайса килме хушсан, савăннипе комиссариатăн çӳлти хутĕнҫи урай хăммисене хуçас пекех сиксе илет вара.

— Ҫăваш йалне кайма епĕ йурататăп, тет вара комиссариатри Миххей пиҫҫей.

Ҫăнах та вăл йуратаť—йалти хĕрсене йуратаť, тата ĕçме йуратаť. Сайом салатма пырсан, Кĕçĕн—Иелҫĕкре РИК çуртĕнҫе çуттине ҫуп туса ларнă (йуратса) тата... татине каламасан та пырĕ.

„Капкăна" лектеретпĕр, тенĕ те çавна, вăл: епĕ хам „Капкăн" хуçи, ман çирен никам та унта çыраймасť, тенĕ.

Сайом хуçи Ианей Миххейĕ, тĕрĕс калатăн: сан çинҫен çырма хăратпăр. Есĕ çырма хушмастăн пулсан, РИК çуртĕнҫе мĕнле сайомсем „салатни" çинҫен те çырмăпăр. Кӳрентермĕпĕр сана.

## Хырҫăк кирлĕ.

Амерĕк, Амерĕк! Амерĕк çыннисем çĕнĕрен йапаласем шухăшласа кăлларма ăста, теççĕ. Мĕн тăватпăр епĕр Амерĕкпа? Амерĕкри ăстаçăсенҫен те ăстарах çынсем пур пирĕн.

Мăн Мамăшри (Шупаш. р.) авалхи пуйан Йаккăв Афанасйĕв хаҫхи вă-

хӑтра пит хӑпарса кайнӑ. Ҫӑпта ҫапакансем укҫа илме пырсан, алӑксене питӗрсе лартӑ те, вара ҫыннисем укҫасӑрах пуҫӗсене хыҫса килӗсене таврӑнаҫҫӗ, тет Хур-тӗкӗ.

Ҫӑпта ҫапакансем хӑйсен пуҫӗсене хӑйсемех хыҫаҫҫӗ апла, Иаккӑв Афанаҫйӗвӑн пуҫне кам хыҫса йарӗши?

Хыҫса йарӑрах. Хӗрхенес пулӑ ӑна та.

## „Пирӗн урам анаталла шуса анӑ пӗр ҫуна".

Ҫуна мар шуса анаканни. Копперат-тив анаталла шуса анӑ.

Ҫиркӳллӗ-Кушкӑра (Сӗнтӗр-Вӑрри р.) ӗлӗк лайӑх ӗҫлесе пыракан копперат-тиврах, йӗке-хӳреллӗ ҫын пурри паларнӑ. Пӗр уйӑх хушшинҫе лавккара 750 тенке йахӑн растраттӑ пулнӑ. Вӑл йӗке-хӳреллӗ ҫын пулнӑ—Поппов, тет Сунтал.

Копперативва йернӗ йӗке-хӳрене тӗрмене йертсе кайас. Ай, хӑйех пӗлети вӑл ун ҫулне.

## Шӑнкӑрҫӑ йурри.

Шӑнкӑрҫӑ аван кайӑк. Иурласса та вӑл аван йурлӑ.

Иӗпреҫ районӗнҫи Ҫӗнӗ-Мӑрат йалӗнҫе йал ҫыруҫи комсомолӗс Шӑнкӑрҫ аҫи сӑмакунпа кӗрешесси ҫинҫен токлат туса панӑ, тата ун пирки Тӗпӗҫтӑвком каларнӑ постановленийе те халӑха вуласа панӑ. Иулашкинҫен Шӑнкӑрҫ: камӑн лайӑх сӑмакун аппараҫӗ пур, пыгарса хурӑр, наҫаррисене йалканашне парӑр, тенӗ. (Тилӗ).

Паҫӑрах каларӑмӑр, — аван йурлӑ Шӑнкӑрҫ. Пит те аван йурлӑ, анҫах таҫта пырса ларӗ. Ӑҫта ларассине кӑштах пӗлетпӗр те: йал ҫыруҫинҫе ларкаларӗ, комсомолта та тӑркаларӗ халиҫҫен. Пӗр ҫӗртех ларни килӗшмест.

## Лӑнҫӑр-ланҫӑр пӳрт.

Иалта санитгари ӗҫӗ наҫар пырӑ, теҫҫӗ. Суйа сӑмах. Хӑш-пӗр йалсенҫе тула тухмалли ҫуртсем те пурҫке.

Шупашкар районӗнҫи Мерше-пуҫӗнҫи иртсе-ҫӳрекенсем тула тухса кӗрес пулсан, хурал пӳртне кӗрсе вараласа кайаҫҫӗ. Пӳрҫӗн ҫӳреҫисем ҫук, кӑмаки йатӑнса аннӑ, халӗ алӑкне вӑрласа кайнӑ, тет Хураскӑри ҫерҫи.

Сирӗн йалсовет претҫе аттӗлӗн хастарлӑхне вӑрласа каймани тата?

## Пӗрӗхмен пыршӑ.

Сӑхӑт-пуҫ йалӗнҫи (Вӑрмар районӗ) Хветӗр Павӑлҫҫӑн ҫӗлхи-ҫӑварӗ сар ҫу пек, ӑс-хакалӗ тилӗ тусӑн пек. Ҫавӑнпа та вӑл ҫуллӑ пӑтӑ ӑшӗнҫех пурӑнӑ.

Ӑна йал халӑхӗ икӗ теҫеттин ыраш акмалли ҫӗр парса, насус пыршӑ илме йанӑ. Лешӗ илсе килнӗ, анҫах кайран насус пыршине сантарса пӑхаҫҫӗ—пӗр тумлам та шыв тухмӑ. Вара йал халӑхӗ 60 пӑт тырӑллӑх йапалана торки туса сугма шухӑшлӑ. 5 пӑт параҫҫӗ, тет.

Иепле ҫӑмах пӗҫернӗ шыв лайӑх сапӑвӑҫке вӑл пыршӑпа (Хветӗр Павӑлҫӑ пуҫӗ ҫине). Ыйтамха сиртен: „сут", Халӑх суҫӗ тенӗ сӑмаха пӗлелекен пури сирӗн йалта?

---

## Хӑратакан хапха.

Шупашкарти театӑрсенҫе ӗлӗкхи патшасем ҫинҫен ҫырнӑ кино-карттинсемпе пйессӑсем кӑтартма йуратӑҫҫӗ. („Канашран").




Трапхин: Мӗн унта „ҫар и пойет" тенӗ, патша килетши мӗн?

Пракух: Капла хунарпа ҫутатнӑскер ахаҫ пулас ҫук, мӗне те пулин пӗлтерет пулӗ.

# Куршанак.

— Сирĕнпе лапăртатса пурăнмастăп урăх, ыран хулана вырăн шырама кайатăп, терĕ ашшĕсене Куршанак Васли пĕре улахран таврăнсан.

— Сана ухмаха илессĕ-и унта. Килте ĕçлени çук. Вите тасатманни пĕр ерне çитет вăн—тухса тасат, терĕ Васлийа хирĕç ашшĕ.

— Епĕ Ишекре вите тасатма вĕренсе тухнă-и!.. Сурса хурам сирĕн вите çине...

Тепĕр кунне Куршанак Васли ҫăнах та тур кĕтессинҫи арҫаран токумĕнҫĕсене пуçтарса илҫĕ те, хулана тухса утрĕ.

— Пĕлтĕр пĕрĕскерне Канаша ăсатса хăварнăҫҫĕха. Аван çын. Çавăн патне кайсан пĕр вырăн тупса парĕ парех, тесе утаҭ Васли Шупашкаралла.

Хулара пĕр çĕр вyртсан Васли хайхи снакскоми патне, уҫрештенийе кĕҫĕ те:

— Сторовă! Есĕр мана палаймастăри тен? Епĕ сире пĕлтĕр Канаша ăсатса хăварнăҫҫĕ, терĕ снаккоми ларакан капинета кĕрсе.

— Паласси... А-аа, астăватăп. Иалтан килтĕни?.. Манăн ыран как рас Канаша каймалла, лартса кайатни, терĕ Васлин снакомийĕ Самăв йулташ.

— Епĕ халĕ çурранахçке.

— Мĕн, ĕç тупăнҫи мĕн?..

— Вырăна кĕрсе пулмĕши, терĕм.

— Неснай, аҫа... Иавăртăрах пулĕ. Çитменне тата ĕнер анҫах штата пĕҫĕклетме хушакан хут илтĕмĕр, терĕ Самăв Васлийа шелленĕ пек пулса.

— Мушĕт май килет?..

— Аптрамалла.

— Невушлĕ пĕр вырăн та çук вара?..

— Ыран кĕрха.

— Мушĕт пĕр вырăн пулаҭ, а?...

Пĕр сехете йахăн антратсан:—çук, вăл кунта ыттисенҫен шикленет пулас. Каçпа хваттерне кайса пуплесен аванрах пулĕ, тесе Васли кăпинетран тухса карĕ.

Каç пулнă çĕре Самăв хваттерне таврнҫĕ те, апат çиме ларҫĕ.

— Свиҫайуç. Уҫрештенире кансĕрлесе çуриҫҫен киле килес терĕм, терĕ апат çинĕ хушăрах Васли кĕрсе.—Ну, мĕнлеши?..

— Тăхта апат çийем.

— Невушлĕ пĕр вырăн та çук вара?..

— Ыран кĕр тĕрĕм вĕт сана. Еккейа, мĕн тăвас ăнланман çынпа.

— Пырасси... Мушĕт кĕçĕрех май килĕ, терĕм те.

Самăв, Васлиран хăтăлас тесе, ыррăн апатне çимесĕрех тумтир тăхăнҫĕ те, портфĕлне илсе:

— Ну, сыв пул, ыран кĕрсе пăх. Пайан ман саççетанийе каймалла, тесе алăк патнелле утрĕ.

— Есĕр хăш йенелле кайаттăр?.. Мушĕт пĕр йенеллех каймалла. Айтăр, епĕ те пырап. Самăв хыççăн Васли те тухса утрĕ. Самăв Васли çине çилленипе ним ҫĕнмесĕр пыраҭ. Васли сăмах хушмасăр пырса, ухмах çын пек пулас мар тесе, халап тупасшăн пуçне çĕмĕрсе пыраҭ. Мĕн çинҫен каласас?.. Çанталăк çинҫен—мушик вырăнне хурасран хăраҭ. Тавар хаксем... советсем çинҫен калаçас—оппоçитсийа лекесрен хăрамалла. Мĕн çинҫен?.. А-а, волокиттă çинҫен. Вăт, вăт—волокитăпа пурин те кĕрешмелле.

— Ну, сирĕн мĕнле, волоккиттă хаҫ те пури, терĕ Васли.

— Хăмм... Есĕ сана вырăн паманшăн волоккиттăпа хăратма шутларăним, тесе хуҫĕ Самăв Васлийа хирĕç.

— Çук... Вопше... Так ахаҫ...

Тепĕр 10 минутран:—ай-ай кăçал йалта сăра ĕçекен нумай, терĕ...

— Ну, сыв пул! манăн кунталла каймалла, тесе Самăв тепĕр урамалла пăрăнса утрĕ.

— А-а, есĕ унталла кайатăн тем. Мăнăн хветтер те çавăнта вĕт.

— Ну, ку шуйтантан мĕнле уйăрлас тесе утаҭ Самăв. Кăшт кайсанах: —Ах, ҫорт воçми! Рапклупа кĕмеллеҫҫĕ. Сыв пул, терĕ те вăрт çаврнса кайалла утрĕ.

— Рапклупа терĕни çак?.. Епĕ пасăрах Рапклупа кĕрес тенĕҫҫĕ, анҫах шыраса тупаймарăм. Сирĕнпе пĕрле тупатăп ĕнтĕ. Айтăр... Рапклупра Самăвăн виçĕ пуслăх ĕç те çук. Васлиран хăтăлас тесе, стенă хыçне кайса пĕр 10 минут тăҫĕ те, каллех урамалла тухрĕ.

— Есĕр кайман тем. Епĕ ҫунтан, ~~сире~~ çухатрăм тесе, куҫанса тăрап, терĕ алăкран тухсанах Самăва Куршанак Васли.

Иккĕш каллех урам варрипе йуна-

# Выҫҫӑх картинҫе.

Поетсем пӗрмайах савнисем ҫинҫен ҫырнӑ сӑввисене каласа ҫӳреҫҫӗ.



ПОЕТ: Ҫунӑм савни, кил тус пулар,
Саншӑн ҫӗрем ман вут-кӑвар.

СУРӐХ: Ҫӑнах саватӑн пулсан,
Ҫасрах килсе ҫуп тусам.

шарах утса карӗҫ.

— Мӗн тӑвас ку ҫынпа. Иатлаҫас— пӳрократ тесе шалӑп пама пултараҫ. Аҫта тарса хӑтӑлас... Аҫтан усалла лав тытса кайни пулҫӗ,—вӑрса пыраҫ Самӑв.

— Ну, сыв пул! Манӑн ҫак ҫурта пӗр хӗр патне кӗрсе тухмалла, терӗ пырсан-пырсан Самӑв пӗр ҫурт умнелле пӑрӑнса.

Пӗр хӗр патне иккӗн кӗме лайӑх мар тесе, Ваҫли аранах уйӑрлса карӗ. Самӑв Ваҫли курӑнми пулиҫҫен алӑк хыҫӗнҫе пытанса тӑҫӗ те, ҫасрах килне карӗ.

Тӗттӗм пулсан ҫынсем театтӑра пухӑнма тапратрӗҫ. Ваҫли те, пӗре тытӑннӑ ӗҫе ҫине тӑрсах тӑвас тесе, Самӑва курма театтӑра карӗ. Самӑвӗ театтӑра арӑмне йертсех пынӑ тата.

Ну, курса калаҫрӑри хайхи хӗрпе, терӗ Ваҫли Самӑва шыраса тупса. Самӑв ни кӑвак, ни хӗрлӗ пулса карӗ. Арӑмӗ пӗре Самӑв ҫине, тепре Ваҫли ҫине пӑхаҫ.

— Ну, вас к ҫортту!—Самӑв арӑм аллине лашт пӑрахрӗ те, килеле тухса вӗҫтерҫӗ. Килӗнҫе ҫӗрпе ҫывӑраймарӗ.

Тепӗр ирҫинҫе уҫрештенийе, епӗ сыв мар пултӑм тесе, пӗлтерҫӗ те, хваттӗр алӑкне тултан ҫӑраҫҫипе питӗртерсе илсе кунӗпех килте ларҫӗ. Кун каҫиҫҫен ҫӑраҫҫийе такам 5-6 хут килсе лӑкаса пӑхрӗ.

Виҫӗ кун килте ларсан, Самӑв тин уҫрештенийе карӗ. Виҫ кун хушшинҫе сӗтелли ҫине пӗр ҫӗклем хут купаланнӑ. Самӑв ҫи ҫиелтине илҫӗ те вулаҫ:—Есӗр ҫирленӗ терӗҫ, шалккӑ сире курмасӑрах каймалла пулҫӗ. Укҫа пӗтмен пулсан... Тепре килнӗ ҫӗре вырӑн тупса хатӗрлӗр пашалӑстӑ...

Сире Канаша усатса хӑварнӑ ҫын
Куршанак Ваҫли.

Самӑв пусӗ хут купи ҫине, ҫытар ҫине ӳкнӗ пек, пашт укрӗ те, нумайҫен силленсе выртрӗ.

**Ваҫҫилйӗв П.**

# МАКАР МАКАРЂ

Макар Макарђ пĕр пуђнитсăра пĕр таталмасăр пĕр 10 çула йахăн ĕçлет. Ăна таврари халăх пурте паллаť. Макар Макарђ, тесех ђĕнет.

Макар Макарђ авланман çын, станлă хвершăл. Çавăнпа та вăл пуђнитсана пыиă хĕрарăмсемпе пўлĕмре ђылайах та пуплесе ларма йуратнă. Анђах пайан пĕр хĕрарăм та курăнман пулсан та—ват карђăксем, пиçĕкрех куçлăскерсем çеç кĕре-кĕре тухнă. Кун каçиђен вăл пĕр илемлĕрех хĕрарăм курмасан ĕçлеме те пултараймаи. Çавăнпа та вăл пайан кĕрхи çанталăк тĕслĕ ларнă.

— Кĕме йураť-и, Макар Макарђ!

— Кĕрĕр, кĕрĕр.

Çутă пушмаклă, ш у р ă шупăрпа, шăлккăвăй тутăрлă пĕр кĕрнеклĕ хĕр кĕрсе тăђĕ. Тутăр вĕçĕпе тутине хўтленĕ, те вăтаннă пек пулса, нимĕн те ђĕнмест.

Макар Макарђ ку хĕртен хăй те вăтаннă пек пулђĕ. Анђах, сасартăк кĕрхи сăнне пăрахса çурхи сăнпа улшăнђĕ. Хăйĕн кăтра çўçне ĕнсе çинелле шăлса, çўхе тутисене кулнă пек туса сăмах пуçласа йађĕ.

— Килех, мĕн сăмахпа-ха, хĕрĕм?

— Шăл...

— Сан пек илемлĕ хĕрсен те шăл ыратма пĕлети вара?

— Уйамасť пуђ вăл.

— Хитре хĕрсен ыратмасť, теççĕ те.

— Хитрисен ыратмасť пуђ те, еп хитре мар çав.

Хĕр Макар Макарђ хăш çулĕпе йуртнине те сисрĕ. Кайалла тухас шут та пур. Анђах шăла тўрлетмелле. Макар Макарђ хăй çулĕпех йуртасшăн.

— Лар кунта, ђунăм çак пукан çине.

— Пуђнатсăна килнĕ çын ăçтан епĕ сан ђуну пулма пултаратăп?

— Ара, йуратса кĕларăм вĕт епĕ ăна.

— Йуратма сан тăвану мар вĕт еп, пăхса йарха ђасрах.

— Йураť, йураť, ђунăм! Кĕпўне хывха еппин. пăхсе йарам.

— Шăл ыратнипе кĕпе хывмаççĕ пуђ ăна...

— Лайăх итлесе пăхмасăр, хăш шăлĕ ыратнине пĕлме хĕн вĕт, ђунăм!

— Кайас пуђ еппин.

— Ан кай-ха, ан кай. Ларах. Кĕпў тўммисене çеç вĕçер.

Хĕр сасартăк сиксе тăрса алăк хăлăпне тытаť. Анђах, Макар Макарђ хăвăрт ђарса, каллех лараť.

— Хăш шăлĕ ыратаť, çăварна карха еппин, хĕрĕм.

— Вăл паллах, хуралнă та ĕнтĕ.

— Кăларас пулаť.

— Кăларас çав.

Макар Макарђ ку хĕрпе пуплесе ларнипе хĕвел çинђи çу пекех пулђĕ. Васкаса шăл кăлармалли хĕскĕђе илсе пыђĕ те, хĕре çăварне варма хушрĕ. Хĕскĕђе хĕр çăварне кĕртсенех, куçĕсене хĕр куçĕсем çине куçарђĕ. Хĕскĕђипе хĕстерсе тулалла туртма тытăнђĕ. Хĕр сасартăк, селĕпĕн кăçкăрса йарсан çеç хĕр çăварнелле пăхрĕ. Хĕскĕђĕ хăрăк, хура шăл вырăнне — хĕп-хĕрлĕ ђĕлхене туртса кăларнине курсан çеç, Макар Макарђ йăпăшт! çемçелсе темĕнле пулса карĕ.

— Ниђђево, ниђђево, хĕрĕм! Сарăмсăр пулђĕ. Тăпăрах лар.

Каллех ĕçлеме тытăнђĕ. Анђах, кайри хăрăк шăл вырăнне, малти çирĕп шăлран çаклатрĕ.

— Ай, ай! Малти мар вĕт, кайарахри ыратаť.

Ниђђево, ниђђево. Сарăмсăр пулђĕ.

Маккар Маккарђ виççĕмĕшĕнђе ста ров шăлах туртса кăларђĕ.

Хĕр çухăрса тухса тарђĕ.

Макар Макарђ хĕскĕђине пăрахмасăрăх кувшинпа тас йатса хĕр çăварне ђўкеме тухса ђупрĕ. Анђах пусма çинђе пĕр суккăр карђăкран такăнса ўкнипе, хăй сăмсине катса пăрахса, кайалла çавăрăнса кĕђĕ.

* * *

Ултă кунтан Макар Макарђа, тухтăрпа пĕрле ĕçлеме, урăх пуђнитсана куçарђĕç. Сакăр тенкĕ шалу ђакарђĕç. Ун укçипех хĕре ылттăн шăл лартса памалла турĕç.

Ç. ШĂПЂĂК.

# Парттийе кĕрес умĕн.




— Есĕр парттийе кĕресшĕн терĕҫ, ђăнах-и?

— Ђăнах пулмасăр. Ахалрен уйăх ытла пивнойа ҫӳремесĕр ђатса пурă натăпи... Р—и.

## Сăмакунпа кĕрешекен.

— Иртнĕ пухура мана сăмакунпа кĕрешекен комиҫҫийе суйларĕҫ.

— Кађака Микихвĕрĕ сăмакун йухтараĭ, кайса тыт ăна, атте!

— Ах, ухмах, хамăр аппаратпа йухтараĭ вĕт вăл! Макҫимăв А.

# Микулайски укҫа.

Йалта ĕлĕкхи пуйансем халĕ те микулайски укҫа ҫўреме пуҫласса шанса пурăнаҫҫĕ.

Пасар. Сутаканĕ сутат̆, илекенĕ илет, вăрлаканĕ вăрлат̆. Ним илсе сутманнисем пасар тăрăх ахалех сăмсисене ӡăсса, йанаххисене каҫăртса ҫўреҫҫĕ. Кив йал Ухванеҫĕн те пайанхи пасарта ним ĕҫ те ҫук. Вăл пайанхи пасара килте ларса пăнтăхнăран анӡах, уҫăлмалла тесе, килнĕ. Килте ларнă ҫĕрте ни ҫынсене курмалла мар, ни ҫĕн сăмах илтмелле мар. Пўртре аӡасемпе йатлаҫсах, йе тулта выђăхсемпе тăрмашсах вăхăт иртсе кайат̆. Ҫитменне тата Ухванеҫĕн аӡисем пĕринӡен тепри усал. Пĕлтĕр пĕр 15 ҫула ҫитнĕ ывăлĕ, карттус ҫĕлес тесе, ашшĕн хура пустав халаӡĕ аркине касса илнĕ те, халĕ ни халат майĕ ҫук, ни пиншак мар. Ҫĕн аркă тума пасарта пустав тупса илмелле мар, укҫи те ҫукрах. Тепĕр аӡи тата вĕр ҫĕн кутлăха, ӡĕн пиҫиххи тума тесе, йалт вакласа тăкнă.—Аӡасем пулмарĕҫ кусем, распойнĕксем пулӡĕҫ, тесе вăрҫат̆ вара Ухванеҫ йаланах.

Ҫав распойнĕксем пек аӡасемпе пурăнса йăлăннăранах пайан Ухванеҫ пасара анмасăр ӡăтаймарĕ.

— Ну, пĕре килнĕ пек ӡух лайăхрах курса ҫўрес, снаккомисене курса каласас, ҫĕн хыпар—хăнарсем пĕлсе кайас, терĕ Ухванеҫ хăй пуҫ тĕшшĕн хăла кĕсрине кĕпер патне тăратса хăварса пасар варинелле утсан.

Ҫĕн хыпар-хăнар пĕлме тенĕрен Ухванеҫ ҫынсем хушшипе пынă май халапланса тăракансем патĕнӡен йури хуллентерех икĕ хăлхине ӡăлт тăратса иртет. Пĕр лапкка хыҫĕнӡен иртнĕ ӡух Ухванеҫ хăлхине:

— Панккăра микулайскисене илеҫҫĕ вĕт, тени кĕрсе карĕ. Ку сăмахсем Ухванеҫе шарт анӡах ҫĕр ҫумне пăталаса лартрĕҫ.

— Невушлĕ а, тесе ыйтрĕ вăл хăйĕнӡен. Вĕт микулайски укҫа кайма пуҫласан ку таврара Ухванеҫ пек пуйан пулмаҫт̆. Ухванеҫĕн револӡутси вăхăтĕнӡе, ӡиркў старăстинӡе пурăннă майпа, тырă ампарĕнӡе пĕр супăӈ арӡи пуӡи микулайски укҫа ларат̆. Хĕпĕртенипе Ухванеҫĕн ӡĕри сўс тыллană пек сикме тапратрĕ. Мушĕт йăнăш илтрĕм пулĕ тесе, вăл хăлхисене ӡĕлĕм йĕппипе ҫăтăр-ҫăтăр ӡакалтаса илӡĕ те, тепĕр хут йури тинкеререх итлерĕ. Лешсем ҫаплах микулайски те микулайски тесе тăраҫҫĕ.

Кун хыҫҫĕн Ухванеҫ—пасару йапалу, каккуй пасар та—вăрт ҫавăрĕнӡĕ те, хăла кĕсрине ҫавăрса килелле вăшт анӡах тутарӡĕ.

— Ăҫта ҫав, карӡăк, пирĕн микулайски супăӈ арӡи, терĕ Ухванеҫ киле ҫитсенех.

Хăй хыпаланса ҫийĕнӡи кивĕ кĕрĕкне хывса кăмака хыҫнелле ывăтрĕ те, аллисене шăлкаласа тур кĕтессинӡе выртакан шӡутка тыгса ларӡĕ. Кĕҫ карӡăкки хайхи арӡана сĕтĕрсе те кĕӡĕ.

Ухванеҫ ӡĕтрекен аллисемпе арӡан ҫийелти хăмисене уҫрĕ те... Ак инкек!.. Нихăҫан йĕрсе курман Ухванеҫ пиӡĕсем тăрăх куҫшўлсем шăпăр-шăпăр йухса анӡĕҫ. Арӡари укҫа вырăнне хут татăккисем ҫех арпа пек арканса выртаҫҫĕ. Хут татăккисем хушшинӡе пилĕк шăши йăви. Кашни йăвинӡе 3-4 шăши ҫўрисем ӡĕрик-ӡĕрик туса выртаҫҫĕ. Ухванеҫ ним тума пĕлмесĕр, арӡана ҫĕклерĕ те, арăм пуҫĕ ҫинелле кĕрст анӡах тутарӡĕ. Карӡăкки ҫавăнтах ҫĕрĕк йупа пек ҫĕре персе анӡĕ.

— Сана, сана... мĕн тăвас сана шуйтана, уу-ух... сире пула укҫа пур ҫинӡех...

Арăмĕ ахлатса выртрĕ-выртрĕ те, мĕнле инкек пулнине ӡухласа илсен:

— Ара, сана ытах унашкал укҫа кирлĕ пулсан, Иăван кĕрўсенӡен кайса ил, вĕсен те пирĕнӡен сахалах пулас ҫук вĕт, терĕ.

— Ах, ӡăнах вĕт. Ну спаҫҫипă сана карӡăк... Ат̆а, тухса лаша кўл ӡасрах, терĕ Ухванеҫ арăмне хулинӡен йатса тăратса .

— Кĕрў, санăн ҫав микулайскисем пурнаҫҫĕ-и ара,мана парса йарха, терĕ Ухванеҫ сăмах ҫавăрăнăшле кĕрўшĕпе пĕр ҫур сехет ҫутти кутĕнӡе халапланса ларсан.

— Пур, ăҫта кайӡăр вĕсем. Ытах

кирлĕ пулсан илсе кай...

Кĕрӳшĕ пуçĕ тавра шухăш виççĕ çавăрăнитҫен, Ухванеç микулайски укçа тултарнă сĕт ҫĕрессине лартса та тухса карĕ. Алăкран ăсатса кăларса йанă ҫух кĕрушĕ:

— Хунҫăкам, сана мĕн тума кирлĕ пулҫĕ ара вăл укçа, тесе ыйтрĕ. Анҫах Ухванеçран сăмах илтес вырăнне, хăла кĕсре хӳри вĕлтĕртетнине çех курса йулмалла пулҫĕ.

— Пут ку вырăнлă йапала пулмарĕ. Навернă микулайски çӳреме пуçланă... Кĕретĕнех çаратса карĕ иç ку хунҫăкам мана,—тин туйса илҫĕ Ухванеç кĕрушĕ.

Çынсем пĕлсе çитиҫҫен ăстан та пулсан тупас тесе, Ухванеç кĕрушĕ çавăнтах хăйматлăххи патне тухса вĕçтерҫĕ. Хăйматлăххи тата тилĕ пек ҫейескер, микулайски укçа патне килнине пĕлсенех, Ухванеç кĕрӳшне парса йарас вырăнне, тӳрех йыснăш патне тухса шăвăнҫĕ. Ыснĕш куккăшсем патне, кунăшсем-пускиле. Пур те такăнса укессе пĕлмесĕр «микулайски» шыраççĕ.

Ухванеç кĕрушĕ патĕнҫен укçана илсе тавăрнсанах, пĕр 50-60 тенкĕ кăсйене ҫикрĕ те, пасар саланиҫҫен аҫасем касса пăснă халат арки тумаллăх та пулсан пустав тупса пулĕ-и, тесе тепĕр хут пасара тухса карĕ.

Пасара çитсен пĕр тутар лапкки умне пырса: —Сирĕн пустав пури, терĕ Ухванеç.

— Пур, ĕнтĕ, пур! Миçе меттăр кирлĕ сана, терĕ тутар пустав вырăнне хура пумаçей кăтартса.

Ухванеç ике меттăр халат аркиллĕх виçтерсе илҫĕ те, тутар çумнерех пырса шăппăн:

— Манăн лешĕ, микулайски хутсем, пулаççĕ вара. Пĕр тенкĕ пуçне миçе пус илеттĕрха, терĕ.

Лах-лах-лах! кулса йаҫĕ тутар.

— Курнă и есĕр тĕнҫе ухмахне... Акă ĕнтĕ вăл тĕнҫе ухмахĕ... Ылтăнĕ пури, ылтăнĕ?... Ылтăнне панккăра та илеççĕ хуть... Хуҫĕсене хурса хăвар, апат çинĕ хыççăн мана лапккă хыçне çӳреме йурĕ ĕнтĕ,—ахăрать тутар усламĕç.

Ухванеç тавра 20-30 çын пухăннă. Уншăн, пасара пухăннă пĕтĕм халăх, пĕтĕм тĕнҫе лахлатса кулнă пек туйăнса карĕ.

Ваççилйĕв П.

## Ҫăвашлатаççĕ.

Йуçтитси Комиссариаҫĕ çумĕнҫи çтена хаçаҫĕ те уҫрештенисене ҫăвашлатма тытăннă. Унта, Ҫăваш Тĕпĕçтăвком йышăннине пурнăçа кĕртес шухăшпа çапла статйасем çыраççĕ:

„ЧУВАШИЗАЦИЯ“—Не родись счастлив, не родись красив, а родись нацменом, — сказал дворник одного Чебоксарского учреждения уволенный за не знание чувашского языка.

Хаçатне кам кăларнине пĕлес тетĕр пулсан, çакна анҫах вулăр:

„Орган Издания (?!) яч. ВКП(б), ВЛКСМ, и МК, № 1. 23 февраля 1928 г. „КРАСНЫЙ „ЮРИСТ“.

Хаçатĕнҫе пĕр ҫăвашла пуквă та çук, пĕтĕмпе 5 статйапа, 5 саметкăпа тулнă.

Партти постановленисем те, совет орканĕсем йышăннисем те çак саметка сыхлакан уҫрештенине пырса çитейменха хăçан çитесси те паллă мар.

„Проккурор асăрха“.

Кроккотил ҫĕппи.

## Хула совеҫĕпе Амерĕк.

Ан тĕлĕнĕр çапла каланинҫен. Хăш ăслă çынсем мĕн те пулин тахçанах паллă йапалана шухăшласа кăларсан, „Амĕрĕк уçрĕ“, теççĕ. Хула совеҫĕ те çавнашкал ретаксинҫен 1927-мĕш çулта, нойапĕрĕн 25-мĕшĕнҫен йанă йалкор саметкине хирĕç кăçалхи февралĕн 21-мĕшĕнҫе „ответ“ йаҫĕ. „Уçрĕ Амерĕк“ хула совеҫĕ. Кама тĕлĕнтерен ĕнтĕ унпа? Хула совеҫĕн вăл кашни ĕçрех пулакан йапала. Пĕрик çултан ответ панă пулсан...

Крокотил ҫĕппи.

## Ыр хĕр ашшĕ.

Уколовнăй Котĕкса çĕнĕрен статйасем кĕртнĕ тăрăх, хĕре каҫ ҫа панă ҫух хулăм укçи илнĕшĕн сута пама йурать.

ХĔРĔ: Ах, атте, копператтива ытла та хитре тутăрсем килнĕçке...

АШШĔ: Ан минтретсе çӳренĕ пултăр. Халĕ саншăн ĕлĕкхи пек хулăм укçи илесси пури мĕн.

Р—и.

# „ПРИМЕРЛĂ“ ИСПОЛНИТТЕЛ.



— **Ей! Иалисполниттĕл, ăçта ђупан?**

— Ара, **кантуртисем милитсисемпе пĕрле килнĕ. Аппарат хуçиее сене кайса систерес тетĕп.**

Отв. редактор **А. Золотов.**

Чувашлит № 224 Чебоксары, тип. „Чувашская Книга“.